26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1943
НОЯБРЬ
24
ЮННУН
232(6469) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Вулав ҫурчӗсемпе клубсен ӗҫне лайӑхлатассишӗн

Уйхир ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн туса пӗтернӗ пулин те, колхозлӑ ял канӑҫа пӗлмесӗр ӗҫлет. Колхозсен амбарӗсем умӗнче, выльӑх-чӗрлӗх фермисенче, тимӗрҫӗ лаҫҫинче — пур ҫӗрте те хӗрӳ ӗҫ вӗресе тӑрать. Совет ялӗ халь хӑйӗн пӗтӗм вӑйӗсемпе маййӗсене фронта вӑйланрах пулӑшнӑ ҫӗре мобилизацилет. Колхоз хресченӗсем нархатарлӑ ӗҫленине пула, вӑрҫӑн виҫҫӗмӗш ҫулӗнче те пирӗн ҫарпа тӑван ҫӗршыв апат-ҫимӗҫ ҫитменнине туймаҫҫӗ, пирӗн колхозсемпе совхозсем ҫарпа халӑх валли апат-ҫимӗҫ, промышленность валли чӗртавар ытлӑн-ҫитлӗн парса тӑраҫҫӗ.

Фронтра тӑшмана ҫапса аркатас ӗҫе хӑвӑртлатас тесен, ҫӗнӗрен ытларах вӑй хуни кирлӗ. Ҫакна колхозлӑ ял ҫыннисем ӑлан асра тытса, пирӗн малашнехи кӗрешӳри йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме хатӗр тӑраҫҫӗ. Партипе комсомол организацийӗсен вӑрҫӑ йывӑрлӑхӗсене хӑюллӑн ҫӗнтерме ял ӗҫҫыннийӗсене вӗрентсе, фронта пулӑшма хавхалантарса пымалла. Вулав ҫурчӗсемпе колхозсенчи клубсен ку ӗҫре партипе комсомол организацийӗсене вӑйлӑн пулӑшса тӑрас пулать.

Колхозниксемпе колхозницӑсем вӑрҫӑ хирӗсенчен килекен хыпарсемпе, Тӑван ҫӗршыв пурнӑҫӗпе калама ҫук хытӑ интересленеҫҫӗ. Совет вонӗсен е совет ӗҫҫыннийӗсен кашни ҫӗнтерӗвӗ вӑл — колхоз хресченӗн савӑнӑҫӗ пулса тӑрать. Ҫакӑ вӑл тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗнтерес шанчӑка ҫирӗплетет, фронта пулӑшма ҫӗнӗ вӑй-хӑват парать.

Сталин юлташӑн доклачӗпе приказӗсене ӗҫҫыннисене вӑхӑтра ӑнлантарса парасси, вӗсене Совет Информаци Бюровӗн оперативнӑй сводкисем ҫинчен, Тӑван ҫӗршыва мухтавлӑн хӳтӗлекенсен фронтри паттӑр ӗҫӗсем ҫинчен вӑхӑтра пӗлтерсе тӑрасси, совет хресченӗсене пирӗн Тӑван ҫӗршыва вӗҫӗмсӗр юратма, тӑшмана пӗтӗм чӗререн курайммасӑр пулма вӗрентесси — ялсенче шӑпах вулав ҫурчӗсемпе клубсем урлӑ пулса иртмелле те ӗнтӗ.

Ҫакна Красноармейски районри Именкасси ялсоветӗнчи вулав ҫурчӗн заведующийӗ Крылова юлташ тӗрӗс ӑнланнӑ. Вӑл вулав ҫурчӗн ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек ҫӗнетсе йӗркеленӗ. Вулав ҫуртӗнче — электричество ҫутти, хӗл каҫма вутӑ ҫителӗклӗх хатӗрленӗ. Вулав ҫурчӗн стенисене плакатсем, лозунгсем, картӑсем илемлетсе тӑраҫҫӗ. Унтах «Юлашки хыпарсен хӑмине», «Кӑтарту хӑмине» куратӑн. Вулав ҫуртне пурӗ 6 йышши хаҫат, 4 йышши журнал килсе тӑраҫҫӗ. Шашкӑ-шахмӑтсем пур.

Крылова юлташ 9 ҫынран вулав ҫурчӗн советне тунӑ. Вулав ҫуртӗнче драма, хор, ПВХО, ГСО тата Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ҫырнӑ кӗнекине вӗренмелли кружоксем йӗркеллӗ ӗҫлеҫҫӗ. ПВХО кружокӗнче кӑҫал 300 колхознике вӗрентсе кӑларнӑ, 75 хӗрачана 110 сехетлӗ программа тӑрӑх ҫар ӗҫне тата хут пӗлмен 29 ҫынна вуламаҫырма вӗрентнӗ.

Ҫак ӗҫсене, паллах, Крылова юлташ хӑй пӗччен туман. Вӗсене пурнӑҫа кӗртме вӑл ялти актива пӗлсе организациленӗ. Вулав ҫурчӗн агитколлективӗнче — 55 агитатор. Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем валли йӑпӑ тумтирсем пухас ӗҫе те, ҫуракине хатӗрлес ӗҫе те, фронта пулӑшас ӗҫе те Крылова юлташ агитаторсем урлӑ туса пырать.

Ҫавӑн пекех Шӑхасан районӗнчи Шуркассинчи, Елчӗк районӗнчи «Марс» колхозри, Калинино районӗнчи Ермошкӑри вулав ҫурчӗсем те мухтава тивӗҫлӗ ӗҫлеҫҫӗ.

Анчах пур ҫӗрте те ҫавӑн пек мар-ха. Чылай ҫӗрте вулав ҫурчӗсем ялти культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫӗн чӑнчӑн центрӗсем пулса тӑманҫха е пачах та ӗҫлемеҫҫӗ, хупӑнса тӑраҫҫӗ. Шӑхасан районӗнчи Тури Сурӑм ялӗнче, сӑмахран, вулав ҫуртне хупса, унта хваттер тунӑ. Вулав ҫуртӗнче ӗҫлеме ҫын та уйӑрнӑ, хутма вутӑ та пур, анчах «Заря» колхоз председателӗ И. Дмитриев вулав ҫурчӗн ӗҫне пачах хаклӑмасть.

Ҫак питех те ответлӑ тапхӑртра вулав ҫурчӗсем ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫлени пулмалла мар. Партипе комсомол райкомӗсем, райҫутӗҫ пайӗсем, ялсоветсем вулав ҫурчӗсене йӗркеллӗ ӗҫлеттерессишӗн ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсем вулав ҫурчӗсемпе клубсем валли ҫителӗклӗ таранах кадрсем, вутӑ, крассин, сӗтел-пукан тата ытти те тупса пама тивӗҫлӗ. Ялти культурӑллӑ мероприятисене тума бюджетра уйӑрса панӑ укҫапа туллин усӑ курса, вулав ҫурчӗсен библиотекисене ҫӗнӗ кӗнекесем илсе пуянлатмалла. Вулав ҫурчӗсене культурӑллӑ канмалли, ҫав вӑхӑтрах ҫӗршыври, пӗтӗм тӗнчери лару-тӑрусене пӗлсе тӑмалли, ӗҫҫыннисене фронта пӗр вӗҫӗмсӗр пулӑшма организацилемелли хӑватлӑ вучахсем туса хумалла.

Ҫулпуҫ чӗнӗвӗ ҫине ответлесе, республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем, хӑйсен хуҫалӑхӗнчи ытлашши тырра государствӑна сутма пуҫларӗҫ. Калас пулать, ҫак ӗҫ, иртнӗ ҫул Хӗрлӗ Ҫар валли ҫар техники тума укҫа-тенкӗ пухнӑ пекех, ӑнӑҫлӑн пуҫланчӗ. Государствӑна 100-шер, 50-шар пӑт тырӑ сутакан патриотсен йышӗ кунсерен ӳссе пырать.

Вулав ҫурчӗсемпе клубсен работникӗсем ҫак патриотла ӗҫе активлӑн хутшӑнма тивӗҫлӗ. Вӗсен государствӑна хӑйсен ирӗкӗпе 100-шер те 50-шар пӑт тырӑ сутакан хӗрӳ чӗреллӗ, Ленин-Сталин партине вӗҫӗмсӗр парӑннӑ, тӑван ҫӗршыва пӗтӗм чӗререн юрӑтакан ҫуламлӑ патриотсем ҫинчен ҫиӗнчех колхозниксен анлӑ массисене пӗлтерсе тӑрас пулать. Вӗсен ҫак майпа мӗнпур тӳрӗ кӑмӑллӑ колхозниксемпе колхозницӑсене государствӑна тырӑ сутма явӑҫтарас пулать, ку ӗҫе лайӑхрах туса ирттерме партипе комсомол тата совет организацийӗсене пулӑшас пулать.

Ку ҫеҫ те мар, ялта халӗ ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешӳ пырать. Ҫуракине кӑтартуллӑн хатӗрлес ӗҫе вулав ҫурчӗсен вӑйлӑн хутшӑнмалла.

Вулав ҫурчӗсемпе клубсен тепӗр пысӑк ӗҫӗ — художествӑллӑ пултаруллӑхӑн ялсенчи смотрне организованно ирттерессипулса тӑрать.

Ҫапла, вулав ҫурчӗсемпе клубсем умӗнче халӗ питех те ответлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсен ӗҫне тӗпрен лайӑхлатни, кашни вулав ҫурчӗпе колхоз клубне боевой агитпункт туса хуни кирлӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

НОЯБРӖН 22-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Ноябрӗн 22-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ДНЕПР шывӗн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кӑнтӑр-хӗвела нӑҫнерехре, тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫса, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем тӑшмантан вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ ЧЕКАЛОВКА, КОНСТАНТИНОВКА, АБРАМОВКА, НЕДОГОРКИ, МИХАЙЛОВКА, МАРЬЕВКА, ВОЛЬНЫЙ ПОСАД, ВОРОШИЛОВКА, КУКОЛОВКА ятлӑ тӗреклӗ пунктсене тытса илнӗ.

ЧЕРНЯХОВ тата КОРОСТЫШЕВ районӗнче пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене сирсе-сирсе янӑ, нимӗҫсене ҫынсемпе техника енчен пысӑк ҫухату кӳнӗ.

ПРИПЯТЬ шывӗн анат тӑрӑхӗнчи районра пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫнӑ, ЛЕНИНСК, СУВИДЫ, ПЕРКИ, ОВЕЛЬЯМОВ, КРАСНО, ЗИМОВИЩЕ, БЕНИВКА, СТАРЫЕ ШЕПЕЛИЧИ, КУРЕНИ, ДЕНИСОВИЧИ, УГЛЫ ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсене тата ПРИПЯТЬ ятлӑ чугун ҫул станцине тытса илнӗ.

РЕЧИЦА хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, ШУПЕЙКИ, ХУТОР, КОКУЕВИЧИ, ЗОЛОТУХА, НОВИНКИ, МАЛОДУШ, СТАРЫЙ БАРСУК, НОВЫЙ БАРСУК, ГРЕБЕНЕВО, ИЗБЫНЬ, ДУБРОВИЦА, ОМЕЛЬКОВЩИНА, ЛУБЕНИКИ, КОТЛОВИЦА, ЗАРЕЧЬЕ, НОВАЯ АЛЕКСЕЕВКА ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсене тытса илнӗ.

ГОМЕЛЬТЕН ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем СОЖ шывӗн сылтӑм енчи плацдарма аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, нимӗҫсен оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ ШЕРСТИН, НОВОСЕЛКО, РАДУГИ, НОВЫЙ МИР, НОВАЯ ЖИЗНЬ, СТАРОЕ СЕЛО, КАЛИНОВКА, КОНИЧЕВ ятлӑ тӗреклӗ пунктсене тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗҫ артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Ноябрӗн 21-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 190 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӳлелле перекен артиллери тӑшманӑн 18 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Днепр шывӗн кукринче, Днепропетровскран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, пӗр соединени чаҫӗсем ҫӗрлехи ҫапӑҫу хыҫҫӑн тӑшман оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ тӗввине тытса илнӗ. Ирхине нимӗҫсем резервсем илсе пынӑ та темиҫе хут та контратака тунӑ. Совет боецӗсем тӑшман контратакисене пурне те ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ, гитлеровецсене пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен 10 танкне тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 3 туппине персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ.

* * *

Кременчуг хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем наступлени туса пынӑ, темиҫе тӗреклӗ пункта тытса илнӗ. Нимӗҫсем темиҫе хутчен те контратакӑсем тунӑ, вӗсен контратакисем пӗри те ӑнӑҫлӑ пулман. Кун каҫиччӗнхи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 1.000 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшманӑн 66 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн чаҫсем нимӗҫсенчен 4 танк, 36 тупӑ, 80 пулемет, тӗрлӗрен ҫар хатӗрӗсем турттарса пыракан 100 автомашина ытла тытса илнӗ. Чылай гитлеровецца тыткӑна илнӗ.

* * *

Коростышев районӗнче тӑшман, фронтӑн пӗр анӑҫ участокӗнче хӑйӗн пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйне пухса тӑратса, пирӗн оборонӑна татса кӗме хӑтланнӑ. Хаяр ҫапӑҫу пуҫланса кайнӑ. Совет боецӗсем нимӗҫсен пур атакисене те сирсе янӑ, хӑйсен позицийӗсене хӑйсен аллинчех тытса юлнӑ. Танксен ҫапӑҫӑвӗсенче тата артиллеристсемпе бронебойщиксем нимӗҫсен 80 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Пирӗн позицисем умӗнчи вырӑнсенче тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсен виллисем калама ҫук нумай выртса юлнӑ. Черняхов районӗнче пирӗн чаҫсем тӑшманӑн икӗ атакине сирсе янӑ, 600 гитлеровецца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

8 летчик-штурмовик, гварди капитанӗ Кузин командир пулса ертсе пынипе, пӗр чугун ҫул станцине тапӑннӑ чухне тӑшманӑн 2 ҫар эшелонне ҫунтарса янӑ тата 5 эшелонне сиенленӗ.

* * *

Речица хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене тытса илнӗ. Пӗр соединени чаҫӗсем, тӑшмана хӗвеланӑҫнелле хӑваласа пырса, нимӗҫсен 800 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Темиҫе артиллери батарейине, снарядсен тата минӑсен складне тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Пӗр районра пирӗн кавалеристсем гитлеровецсен ротине ҫавӑрса илнӗ те йӑлтах пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Хура тинӗсре пирӗн летчиксем тӑшманӑн нефть турттаракан 1.000 тонна таякан баржине шыва путарнӑ.

* * *

Литвари партизансен «За Родину» ятлӑ отрячӗ нимӗҫсен боеприпассем турттарса пыракан эшелонне вут хыптаракан броня. пульлисемпе пенӗ. Эшелона вут хыпса илнӗ, вӑйлӑ взрывсем пуҫланса кайнӑ. Ҫав эшелонри пур вагонсем те пӗтнӗ. Литовецсен партизанӗсен тепӗр отрячӗ юлашки кунсем хушшинче тӑшманӑн 4 поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Ҫав крушенисенче 3 паровоз тата темиҫе вунӑ вагон ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Чугун ҫулӑн пите кирлӗ участокӗнче тӑшман поезчӗсем ҫӳреме чарӑннӑ.

* * *

Нимӗҫсен 8-мӗш танковӑй дивизийӗнчи 80-мӗш артиллери полкӗн 2-мӗш батарейинчен тыткӑна лекнӗ лейтенант Карл Гайнц ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Нумайччен пыракан йывӑр ҫапӑҫусем нимӗҫ салтакӗсен вӑрҫас шухӑш-кӑмӑлӗсене пӑсса пӑрахрӗҫ. Халлӗхе нимӗҫ салтакӗсем офицерсем хушнине тӑваҫҫӗ-ха, анчах та пӗрре те тӑвас килнипе тумаҫҫӗ, наказани парасран хӑраса ҫеҫ тӑваҫҫӗ. Наблюдательнӑй пунктра тӑнӑ чухне эпӗ ҫакна асӑрхарӑм: пирӗн салтаксем час-часах штык вӗҫҫӗн вӑрҫасран пӑрӑнса тӑраҫҫӗ. Вырӑссем хӑватлӑн «ура» кӑшкӑрни нимӗҫ салтакӗсене хӑратса пӑрахать. Офицерсем пирӗн вӑрҫӑри лару-тӑру вӗҫӗмсӗрех начарланса пынине шикленешикленех палӑртса пыраҫҫӗ. Нумаях та пулмасть нумайӗшӗ вырӑссене Днепр шывӗ патӗнче чарса лартатпӑр тесе шанатчӗҫ. Халӗ ӗнтӗ ҫак шанчӑк та пӗтсе ларчӗ. Нимӗҫ офицерӗсем нумайӗшӗ ҫапла шутлаҫҫӗ: вырӑссем Киева туртса илни тата Украинӑн чылай пысӑк пайне вырӑссене каялла пани Германишӗн питӗ пысӑк ҫухату пулса тӑрать. Ҫав ҫухатусем хыҫҫӑн нимӗҫ ҫарӗ ӗнтӗ нихҫан та тӳрленсе ҫитеймӗ».

* * *

Аялтарах нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Мелитополь хулинче тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен ҫырнӑ акта пичетлетпӗр: «Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем пирӗн хулара икӗ ҫул хушши тискерленсе пурӑнчӗҫ, мирлӗ ҫынсене ҫаратрӗҫ, асаплантарчӗҫ тата вӗлерчӗҫ. 1941-мӗш ҫулхи октябрь уйӑхӗнче Бердянск кӗперӗ патӗнчи арман патне 3.000 ҫынна ытла хӑваласа пычӗҫ те танксене чарма алтнӑ шӑтӑк умӗнче персе пӑрахрӗҫ. Ҫакӑ вӑл пуҫламӗшӗ кӑна пулчӗ-ха. Ҫав вӑхӑтран пуҫласа вара кашни кун тенӗ пекех ҫав шӑтӑк патне хӑйне уйрӑм автомашина ҫӳрерӗ. Гестаповецсем ҫав машинӑран арестленӗ совет гражданӗсене тӗке-тӗке кӑларатчӗҫ те ҫавӑнтах пере-пере пӑрахатчӗҫ. Мирлӗ ҫынсене массӑллӑ вӗлерессипе ҫавӑн пекех хула хӗррисенче те, Данило-Ивановка тата Круча ялӗсем патӗнче те пулса пычӗ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, гитлеровецсем хӑйсем пуҫ пулса тӑнӑ вӑхӑтра хулари мирлӗ ҫынсене 14.000 ҫынна ытла вӗлернӗ. Каялла чакма пуҫласан, нимӗҫ бандичӗсем пурӑнакан ҫурчӗсене унти ҫынсемпе пӗрлех сирпӗте-сирпӗте е ҫунтара-ҫунтара ячӗҫ. 1943-мӗш ҫулхи октябрӗн 13-мӗшӗнче нимӗҫ пуҫкасаканӗсем тӗрмене 250 хӗрарӑмпа ачана ытла хӑваласа кӗртрӗҫ те ҫӗрле ҫав тӗрмене ҫунтарса ячӗҫ.

Гитлеровецсем Мелитополь хулине ишӗлтерсе пӗтерчӗҫ. Вӗсем насоспа компрессор заводне, Микоян ячӗпе тӑракан завода, Воровский ячӗпе тӑракан завода, консервӑсем тӑвакан завода тата ытти предприятисене те, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан темиҫе ҫӗр ҫурта сирпӗнтерсе ячӗҫ. Ҫав калама ҫук усал ӗҫсемшӗн чи айӑплисем ҫаксем пулаҫҫӗ тесе шутлатпӑр: нимӗҫсен Крымри генеральнӑй комиссар теекен палач Георг Гейниш, унӑн заместителӗ Кунценгаузен, гестапо начальникӗ Кула тата хула бургомистрӗ Классен».

Акт ҫине алӑ пуснӑ: хула исполкомӗн председателӗ Филипповский, Мелитополь хули ҫыннисем — Миньков, Трофимова, Кошкарев тата ыттисем те.

Монголи Халӑх Республикин суту-илӳ делегацийӗ Мускава килни

Ҫак ҫулхи ноябрӗн 20-мӗшӗнче Мускава Монголи Халӑх Республикин суту-илӳ делегацийӗ ҫитнӗ. Делегацие премьер-министрӑн заместителӗ Ламожаб ертсе пырать.

Вокзалра делегацие ҫаксем хирӗҫ тухса йышӑннӑ: Тулашри суту-илӳ Халӑх Комиссарӗн заместителӗ Ю. М. Каганович, Наркомвнешторг коллегийӗн членӗ П. Н. Кумыкин, Наркоминделӑн отдел заведующийӗ Г. П. Латышев, ҫавӑн пекех тата Монголи Халӑх Республикин Совет Союзӗнчи чрезвычайнӑй тата полномочнӑй посланникӗ Самбу.

Вӑрнар районӗнчи ялхуҫалӑх ӗҫӗнче малта пыракан ҫамрӑксен слечӗ

Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ колхозра Вӑрнар районӗнчи ялхуҫалӑх ӗҫӗнче малта пыракан ҫамрӑксен слечӗ пулса иртрӗ. Слетра ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Чарыков, Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗ Матвеев, Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссарӗ Белолипецкий, ВЛКСМ Обкомӗн секретарӗ П. Михайлов юлташсем пулчӗҫ.

Слет ВКП(б) Вӑрнар райком секретарӗн С. К. Коротков юлташӑн «1943-мӗш ялхуҫалӑх ҫулӗн итогӗсем тата 1944 ҫулхи задачӑсем ҫинчен» тунӑ докладне пысӑк тимлӗхпе итлерӗ. Пренире: комсомолӑн «Самолет» колхозри пуҫламӗш организацийӗн секретарӗ Кондратьев, «Победа» колхозӑн агрономӗ Кузнецов, «Волга» колхозӑн тимӗрҫи Фуксин, Уравӑшри «Майӑн 1-мӗшӗ» колхозӑн председателӗ Васильев, 8-мӗш трактор бригадин бригадирӗ Софронов, ВЛКСМ Обкомӗн секретарӗ П. Михайлов юлташсем тухса каларӗҫ. Вӗсем 1943 ҫулта ҫамрӑксем вӑйлӑ тырпулшӑн мӗнле кӗрешни ҫинчен каларӗҫ. Халиччен колхоз уйхирӗсенче тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе усӑ курман майсене кӑтартса пачӗҫ.

Слетра ялхуҫалӑх работникӗсем умӗнче тӑракан малашнехи задачӑсем ҫинчен ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ пысӑк сӑмах тухса каларӗ.

Слет Оборонӑн Государственный Комитечӗн Председателӗ Сталин юлташ патне ҫыру ҫырма сӗннине чылайччен хӗрӳллӗн алӑ ҫупса тулли кӑмӑлпа кӗтсе илчӗ.

Слет Чӑваш республикинчи мӗнпур ҫамрӑксемпе комсомолецсене, колхозниксемпе колхозницӑсене чӗнсе калакан ҫыру йышӑнчӗ.

10.000 ҫурта юсаса хатӗрленӗ

Аслӑ ҫапӑҫу хыҫҫӑнхи уйӑхсем хушшинче Сталинградра 10.000 ҫурт тунӑ е кивӗнсене юсанӑ. Ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне хӗле кӗме хатӗрлесе ҫитернӗ ҫуртсене 97.506 ҫынна вырнаҫтарнӑ. (ТАСС).

Колхозниксемпе колхозницӑсем! Тӑван ҫӗршыва тырпул вӑрҫӑ хатӗрӗсем пекех кирлӗ. Колхозлӑ ялӑн пӗтӗм вӑйне фронта пулӑшнӑ ҫӗре парар!

Пӗр кун хушшинче — 65.000 пӑт

ЕЛЧӖК, ноябрӗн 23-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсенче государствӑна тырӑ сутакансен хисепӗ ӳснӗҫемӗн ӳссе пырать. Пӗр кун хушшинче кӑна колхозсем государствӑна 65.000 пӑт тырӑ сутрӗҫ. Вӑл хисепрен Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз 10.000 пӑт, Ленин ячӗпе тӑракан колхоз 12.600 пӑт, «Комбайн» колхоз 6.000 пӑт ытла сутнӑ. Журавлевкӑри колхоз, унта пурӗ те 28 хуҫалӑх ҫеҫ, 1.500 пӑт сутнӑ.

Нумай колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен хуҫалӑхӗнче перекетленӗ тырра темиҫе вуншар пӑт государствӑна сутаҫҫӗ. Ҫапла Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ вӑрҫӑ инвалиӗ В. Зайцев юлташ 60 пӑт, Ленин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Мартынов юлташ 30 пӑт сутнӑ. Вуншар пӑт сутакансем темиҫе ҫӗршерӗн шутланаҫҫӗ

Н. ВОЛКОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Шкул ачисем те государствӑна тырӑ сутаҫҫӗ

КАЛИНИНО, ноябрӗн 23-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсенче государствӑна тырӑ сутас ӗҫ пысӑк активлӑхпа пырать. Ку ӗҫе ваттисемпе ҫамрӑк колхозниксем те хутшӑнаҫҫӗ. Каганович ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ А. Челушкин юлташ 20 пӑт, 10-мӗш класра вӗренекен Геннадий Скворцов 10 пӑт тырӑ сутрӗҫ. «Новая жизнь» колхоз председателӗ Дария Угнева 27 пӑт, 7-мӗш класра вӗренекен Е. Лукина 5 пӑт сутрӗҫ.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Ефремовпа Григорьев юлташсем пӗрер тонна сутрӗҫ

Сталин юлташ кӑҫалхи ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ докладра Хӗрлӗ Ҫара тата ытларах пулӑшма чӗнчӗ. Аслӑ ҫулпуҫ сӑмахӗ ҫине ответлесе, колхоз членӗсем Хӗрлӗ Ҫара тата вӑйлӑрах пулӑшма тупа турӗҫ.

Вӑрмар районӗнчи колхозсем ноябрӗн 22-мӗшне государствӑна 215 тонна тырӑ сутнӑ. Кивӗ Вӗренерти Молотов ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Ефремов юлташ государствӑна пӗр тонна, колхоз счетоводӗ Волков юлташ 7 центнер, Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалиӗ Антонов юлташ 2 центнер тырӑ сутрӗҫ. Ку колхозра паянхи куна государствӑна 450 центнер тырӑ сутнӑ. «Дружба» колхоз членӗсем государствӑна 150 тонна тырӑ сутма йышӑннӑ. Колхоз председателӗ Григорьев юлташ пӗр тонна сутнӑ. Ҫӗнӗ Вӗренерти «Красные Мураты» колхоз председателӗ Никитин юлташ 8 центнер, «Комбайн» колхоз председателӗ — Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалиӗ Мясников юлташ 30 пӑт тырӑ сутрӗҫ.

М. ЗАЙЦЕВ.

„Пирӗн хӑвата тӑшман татах та ытларах туйӗ“

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрӗн 23-мӗшӗ. (Телефонпа). Сталин юлташ колхозлӑ хресченсен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ӗҫӗсене пысӑккӑн хаклани колхозниксемпе колхозницӑсене савӑнтарать. Вӗсем, мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара ҫӗнтерӳ тума пулӑшассишӗн вӑй-хала шеллемесӗр ӗҫлесе, кӑҫал тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗҫ. Халӗ хӑйсен ытлашши тыррине государствӑна сутаҫҫӗ. Ҫапла, Албахтино ялсоветӗнчи «Партизан» колхоз 4.000 пӑт, «Сила» колхоз 2.500 пӑт, Янкас ялсоветӗнчи «Волга» колхоз 3.000 пӑт сутнӑ. Сутнӑ тырра хатӗрлев пунктне хӗрлӗ обозсемпе кайса параҫҫӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем, государствӑна тырӑ сутса, хӑвӑртрах ҫӗнтерӳ тума Хӗрлӗ Ҫара пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем: эпир ҫӗршыва пур тӗлӗшпе те пулӑшнине тӑшман татах та ытларах туйӗ, — тесе пӗлтереҫҫӗ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Патриотла ҫӗкленӳ

ТАВАЙ, ноябрӗн 23-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницӑсем, Хӗрлӗ Ҫарӑн чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсемпе хавхаланса, Аслӑ ҫулпуҫ фронта татах та ытларах пулӑшма чӗнни ҫине ответлесе, государствӑна хӑйсен ирӗкӗпе тырӑ сутма тытӑнчӗҫ. Ленин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем ҫак ыйтупа пухӑннӑ пухура государствӑна 12.145 пӑт тырӑ сутма пулчӗҫ. Колхоз председателӗ Григорьев юлташ 16 пӑт, партин пуҫламӗш организацийӗн секретарӗ Конева юлташ 6 пӑт сутма пулчӗҫ. Государствӑна тырӑ сутас ӗҫ пур колхозсенче те патриотла ҫӗкленӳпе пырать. «Красная Чувашия» колхоз 12.175 пӑт, «Сталь» колхоз 6.100 пӑт сутма пулчӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен ытлашши тыррине государствӑна йӑлтах пама пулаҫҫӗ.

А. МОЛОСТВОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Кашни колхозник тырӑ сутать

ЭЛӖК, ноябрӗн 23-мӗшӗ. (Телефонпа). Государствӑна тырӑ сутас ыйтупа колхозсенче пухусемпе митингсем пулса иртеҫҫӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем, фронта ытларах пулӑшас шутпа, хӑйсем перекетленӗ тырпула пӗр шухӑш-кӑмӑллӑн государствӑна сутма пулаҫҫӗ. Крымсарайка ялсоветӗнчи колхозсем 8.000 пӑт сутма пулнӑ. Вӗсем паян хӗрлӗ обозпа 400 пӑт ытла тырӑ тиесе кайрӗҫ. Шӗвӗшри Каганович ячӗпе тӑракан колхоз 600 пӑт сутма пулнӑ. Колхоз председателӗ Варламов юлташ 25 пӑт сутать.

Яргунькино ялсоветӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем пурте государствӑна тырӑ сутма кӑмӑл турӗҫ. 65 ҫулхи колхозник Петр Военов юлташ 20 пӑт тата ытти нумайӗшӗсем 5—10-шар пӑт сутаҫҫӗ.

Государствӑна тырӑ сутасси патриотла ҫӗкленӳпе пулса пырать

Государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пунктне леҫеҫҫӗ

ИШЛЕЙ, ноябрӗн 23-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем пӗр кун хушшинче кӑна государствӑна 7.500 пӑт тырӑ сутрӗҫ. Уйрӑмӑнах «Труд», Свердлов ячӗпе тӑракан, «Клевер» тата «Ыраш» колхозсем паха примерсем кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем сутнӑ тырра хатӗрлев пункчӗсене ҫийӗнчех леҫме пуҫларӗҫ.

Ытти колхозсенче те государствӑна тырӑ сутасси анлӑн сарӑлса пырать. Колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсем перекетленӗ тырпула государствӑна хавасланса сутаҫҫӗ.

П. СИДОРОВ.

Ӳкерчĕк çинче: пĕр заводри стахановец **А. И. Паргункин.** Вăл отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ, нормăна 250—320 процент тултарать.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Фронтовиксен хастарлă ĕçĕ

Элĕк районĕнче Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕсене пурне те тенĕ пекех ĕçе вырнаçтарнă. Вĕсем хăйсен пултарулăхне кура тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлеççĕ. Сăмахран, колхоз председателĕсем пулса 9 çын, колхоз бригадирĕсем пулса—20, счетоводсем пулса—21, ферма заведующийĕсем пулса—11 çын ĕçлеççĕ.

Фронтовиксем хăйсене шанса панă ĕçсене ăнăçлăн туса пыма тăрăшаççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем ĕçре пример кăтартаççĕ.

Фронтовик Григорий Матвеев Патаккассинчи «Броневик» колхоза ертсе пырать. Вăл тăрăшса ĕçленипе колхоз кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пычĕ. Авăн çапас ĕçе, акă, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне, государствăна тырă парассине октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçленĕ. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене сентябрь уйăхĕнчех пуçтарса кĕртсе государствăна парса татнă.

«Броневик» колхоз государство умĕнчи пур обязательствăсене те срокчен пурнăçланă. Аш-какай памалли обязательствăна вăл 113,2 процент, çăмарта, сĕт-çу, брынза, çăм памалли обязательствăсене çĕр процент ытларах тултарнă; Хĕрлĕ Çар фондне 2.491 килограмм тырă панă.

Сорăмпуç Мочейри «Хĕрлĕ ялав» колхоз та районра малта пыракансенчен пĕри. Вăл кăçал уйри тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ, фронтовой уйăхлăхăн малтанхи кунĕсенчех çапса пĕтернĕ тата государствăна парса татнă. План тăрăх кăçал колхозăн 20,22 центнер какай, 2.183 çăмарта, 3.434 литр сĕт, 19 килограмм брынза памалла, вăл октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех 26,45 центнер какай, 2.310 çăмарта, 3.659 литр сĕт тата 22 килограмм брынза панă.

Колхоз председателĕ фронтовик Петр Игнатьев колхозниксене ĕçре хăй пример кăтартса пырать. Вăл яланах колхозниксем ĕçленĕ çĕрте. Час-часах вĕсемпе калаçать, фронтри хыпарсемпе паллаштарать. Колхоз председателĕ калание колхозниксем хăвăрт пурнăçлама тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен председатель калани вĕсемшĕн закон пулса тăрать.

Витеçутĕнчи «Шуçăм» колхоз председателĕн — Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕн Капитонов юлташăн та колхозниксем хушшинче авторитечĕ пысăк. Вăл калание колхозниксем итлеççĕ, кирек мĕнле ĕç хушсан та, ăна вăхăтра пурнăçлаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ колхоз кăçал ялхуçалăх çулне никăçанхи пек мар ăнăçлăн вĕçлет. Тырпулсене, пахча-çимĕçсене тахçанах пухса кĕртнĕ, авăна октябрь уйăхĕнчех çапса пĕтернĕ, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçланă. Халĕ колхоз хăйне панă планран ирттерсе государствăна тырпул тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парать. Çапла, сăмахран, октябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне вăл 1943-мĕш çулхи планран ирттерсе 923 килограмм аш-какай, 352 çăмарта, 134 литр сĕт, 1.772 килограмм брынза панă.

Ехремкасси ялсоветĕнчи «Труд», Буденный ячĕпе тăракан тата «1-ое Мая» колхозсем те кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче начар мар ĕçлерĕç. Ĕçре уйрăмах фронтран аманса килнĕ юлташсем малта пычĕç. Фронтовиксен Леонтьев, Кузнецов, Никитин юлташсен бригадисем, акă, пур ĕçе те вăхăтра туса пычĕç. Çавăншăн ĕнтĕ вĕсем ВКП(б) райкомĕпе райисполком премине илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Фронтовиксем производствăра çеç мар, обществăллă ĕçсенче те пример кăтартаççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем агитаторсемпе беседчиксем, стена хаçат редакторĕсем пулса ĕçлеççĕ. Хăйсен тĕрĕс те витĕмлĕ сăмахĕсемпе вĕсем колхозниксене фронта пулăшас тĕлĕшпе вăйлăрах ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Коммунистсем Гавриловпа Скворцов юлташсем «Красная Сорма» тата «Новый путь» колхозсенче счетоводсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем учетпа отчет ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Çав вăхăтрах колхозниксем хушшинче агитмассăллă ĕçе анлăн туса пыраççĕ. Уборка вăхăтĕнче кăна вĕсем колхозниксем хушшинче вуншар калаçу ирттернĕ, куллен хаçат-журналсем вуласа панă, стена хаçачĕсем кăларнă.

Колхозсенче ĕçлекен вăрçă инваличĕсем фронтра чухне хăйсене панă боевой заданисене епле пурнăçланă, тылра та ĕçе çавăн пек туса пыма тăрăшаççĕ. Вĕсем хăйсен мĕн пур вăйне, пултарулăхне фронтпа çĕршыва ытларах пулăшас тесе параççĕ.

Х. ЛИСИН.

Çуракине тĕплĕн хатĕрленме тытăнчĕç

КУСЛАВККА. Йĕрпуерти Тельман ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулсенче ялхуçалăх ĕçĕнче кая юлса пынă. Государство умĕнчи парăмсене те вăхăтра парса татайман.

Халĕ ку колхозра çĕнĕ председатель. В. Герасимов юлташ хăйне председатель пулма суйласанах колхозри ĕçсене лайăхлатассишĕн вирлĕн ĕçлеме тытăнчĕ. Колхоз ĕçне оперативно ертсе пынине пула, кăçалхи çул Тельман ячĕпе тăракан колхоз пур ялхуçалăх ĕçĕсене те кĕске срокра вĕçлерĕ. Государство умĕнчи пур парăмсене те парса татрĕ. Государствăна 1944-мĕш çулшăн 162 центнер тырă, 8 центнер аш-какай панă.

Халĕ колхоз хĕрсех çитес çуракине хатĕрленет. Акмалли вăрлăхсем пур культурăсем енĕпе те çителĕклĕ таран уйăрса хунă. Вĕсене çурри ытла сортланă. Ку ĕçе йĕркеллĕ туса пыма ятарласа бригада организациленĕ. Ялхуçалăх машинисене те юсама тытăннă. Уя тислĕк кăларма пуçланă.

Çураки ĕçĕнче туртăм вăйĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна шута илсе, кунта лашасене пăхас ĕçе чи шанчăклă колхозниксене хушнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем çулпуçа çĕршывпа фронтшăн татах тăрăшса ĕçлеме сăмах параççĕ, кашниех вĕсем 1944 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

М. СЕМЕНОВ,
Тельман ячĕпе тăракан колхоз счетоводĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăх

Ĕç вăйне хăвăртрах мобилизацилемелле

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăха лайăх организацилес тĕлĕшпе партипе совет организацийĕсене татăклă кăтартусем пачĕç. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен, чи малтан, вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ кирлĕ таран мобилизацилемелле.

Фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа виçĕ кун иртрĕ. Хăшпĕр районсенче чугун çул валли вутă хатĕрленĕ çĕре ĕç вăйĕ малтанхи кунсенчех мобилизацилерĕç. Çапла, Калинино районĕнчи колхозсенчен халĕ вăрманта çуранпа 125 çын вырăнне 201 çын, лашапа 105 çын вырăнне 90 çын ĕçлеççĕ. Чкаловски, Елчĕк, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсем те хăйсен задачисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Анчах та республикипе илсен, вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ мобилизацилесси кирлĕ пек пулса пымасть-ха. Чугун çул валли вутă хатĕрленĕ çĕрте çуран 2.394 çын, лашапа 2.096 çын ĕçлемелле пулсан, ноябрĕн 22-мĕшĕнче çуран 1936 çын, лашапа 891 çын çеç ĕçленĕ. Ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран мобилизацилеменшĕн чи малтанах Октябрьски, Çĕрпӳ, Шупашкар, Çĕмĕрле тата ытти хăшпĕр районсем ответлă. Вĕсем сӳрĕк ĕçленине пула ĕнтĕ чугун çул валли вутă хатĕрлесси çителĕксĕр пулса пырать.

Вăрман хатĕрлемелли плана тултарасси — вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи питех те кирлĕ задача пулса тăрать. Партипе совет тата комсомол организацийĕсен вăхăта вăраха ямасăр ĕç вăйĕ кирлĕ таранах мобилизацилемелле. Çавăнпа пĕрлех колхозниксене вăрманта пĕтĕм хĕллехи сезон тапхăрĕнче ĕçлеме çирĕплетессишĕн тăрăшмалла.

Колхозниксемпе колхозницăсем фронтшăн, çĕнтерӳшĕн пулсан вăя шеллемесĕр ĕçлеме хатĕр. Вĕсем çакна ялхуçалăх ĕçĕнче те, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе те уçăмлăн кăтартса параççĕ. Политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пырсан, кашни колхозникпе колхозницăна вăрман хатĕрлевĕ хуçалăхри пысăк задача пулни çинчен тĕплĕн ăнлантарса парсан, паллах, вĕсем вăрманта ĕçлеме хастарлăн хутшăнĕç.

Малта пыракансемпе танлашмалла

ЭЛĔК, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтовой уйăхлăха чылай колхозсем активлăн хутшăнчĕç. Вăрманта ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне ӳстереççĕ. Юманлăхри Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Г. Федоров, Е. Волков тата Е. Трофимова юлташсем кунсерен 2,5 кубометр хатĕрлес вырăнне 3—4-шар кубометр хатĕрлеççĕ. Çавăн пекех «Зерно» колхоз членĕсем Ф. Иванова, Е. Петрова юлташсем те кашни куллен виçшер норма тăваççĕ.

Анчах районри пур колхозсем те вăрман хатĕрлемелли плана тултарас енĕпе çине тăрса ĕçлемеççĕ-ха. Вăрманта çуран 125 çын, лашапа 100 çын ĕçлемелле пулсан, хальхи вăхăтра çурри те ĕçлемест. Изванка ялсоветĕнчи «Красный пахарь», «13 лет РККА», «Челюскин» колхозсем ку таранах çитсе те вăрманта ĕçлеме çынсем уйăрса яман. Вырăс-Сурăм ялсоветĕнчи тата Самушкăри колхозсенчен те вăрманта ĕçлекенсем сахал. Çакă вăл ялсовет председателĕсем вăрман хатĕрлев ĕçне тивĕçлипе хакламаннинчен килет.

Ӳкерчĕк çинче: Чкаловски районри «Çăлтăр» колхозăн аслă кĕтӳçи **С. И. Рыбаков.** Вăл аслă кĕтӳçĕ пулса çиччĕмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Кăçал вăл 181 сурăхран 187 путек илнĕ. Çĕнĕ çулччен тата темиçе путек илме шутлаççĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

„Хĕрлĕ Октябрь" колхозăн сысна ферминче

ЕТĔРНЕ. Мăн Йĕкĕтри «Хĕрлĕ Октябрь» колхозăн сысна ферми (колхоз председателĕ Ф. Рожков, ферма заведующийĕ Н. Афонькин юлташсем) — районри чи малта пыракан ферма. Ку фермăн ăратлă сыснисем çинчен районра пур колхозсем те пĕлеççĕ. Чылай колхозсем вĕсене туянма тăрăшаççĕ. Хăшпĕр колхозсем, тĕслĕхрен, Пĕрсырланри Ворошилов, Палтайри Буденный ячĕсемпе тăракан, Çĕнĕ Етĕрнери «Комсомол», «Красный маяк» колхозсем çак фермăри сыснасене туянчĕç те ĕнтĕ.

Фермăра сыснасем пурĕ 117 пуç. Вĕсем пурте таса та мăнтăр. Вĕсене пăхас тĕлĕшпе Вера Субботинăпа Дария Степанова тимлĕн ĕçлеççĕ.

Сыснасене зоотехника правилисем тăрăх пăхса пынине пула, вĕсен çурă парас тухăçлăхĕ ӳссе пырать. План тăрăх, иртнĕ çулта кашни ама сыснаран 11-шер сысна çури илмелле пулнă, кунта 17-шер сысна çури илсе ӳстернĕ, хăшпĕр сыснасем 24-шар çурă панă.

Сысна çурисене аван пăхаççĕ. 1941 çулта фермăра 15 çурă вилнĕ пулнă. Иртнĕ çулта вара виçĕ сысна çури çеç вилнĕ. Кăçал пĕр сысна çури те вилмен-ха.

Кăçал йывăр туртакан сыснасен хисепĕ те ӳсрĕ. 200—250-шар килограмм туртакан сыснасем вуншарăн шутланаççĕ. «Куль» ятлă сысна 302 килограмм туртать.

«Хĕрлĕ Октябрь» колхозăн сысна ферми колхоза пысăк тупăш парать. Колхоз кăçал сывăхри колхозсене, колхозниксене тата базарта сысна çурисем сутса 103 пин тенкĕ тупăш турĕ. 1943 çулшăн государствăна аш-какай парса татнă, 1944 çулхи обязательство шучĕпе 778 килограмм панă. Кунсăр пуçне фронтовиксен çемьисене те кăçал сысна çурисем нумай панă.

А. КРАСНОВ.

Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тăвас тĕлĕшпе иртекен çирĕмкунлăх

Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисене пулăшмалли фонд тăвас тĕлĕшпе пуçланнă çирĕмкунлăхăн малтанхи вунăкунлăхĕ иртрĕ. Елчĕк, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски районсенчи ĕççыннисем çав фонда тунă çĕре темиçешер тонна çăнăх, çĕрулми, темиçешер центнер кăрпе, сухан, купăста, çавăн пекех çу, пыл тата ытти продуктсем нумай пухса пачĕç. Çӳлте асăннă районсенчи партипе совет организацийĕсем ку ĕçе тивĕçлипе хакласа, ăнăçлăн туса пыраççĕ.

Анчах фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тăвас тĕлĕшпе чылай районсенче, уйрăмах Первомайски, Ишлей, Вăрмар, Калинино районĕсенче сӳрĕк ĕçлеççĕ. Унти руководительсем çак питех те кирлĕ ĕç çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ-ха.

Фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшни — мухтавлă Хĕрлĕ Çарпшăн, тăшмана çĕмĕрсе тăкас сехете сывхартассишĕн тăрăшниех. Çавăнпа та ку ĕçе пур районсенче те питех те тимлĕн туса пымалла.

„Фронтри боец хăйĕн çемьишĕн тăрăшнине туйса тăтăр"

ЕЛЧĔК, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Хĕрлĕ Çарăн хăватлă наступленийĕ районри ĕççыннисене каламалла çук пысăк савăнăç кӳрет. Сталин юлташ фронта пĕтĕм вăйпа пулăшса тăма чĕнни çине ответлесе, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем фронта, çавăн пекех фронтовиксен çемьисене пĕтĕм вăйпа пулăшса тăраççĕ.

Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тумалли çирĕмкунлăх пуçланнăранпа районра пурĕ 150 центнер çăнăх, 10 центнер кĕрпе, 60 центнер çĕрулми, 6 центнер купăста, 40 килограмм сухан, 3 пăт çу, 3 пăт пыл пухнă. Ку ĕç халĕ малалла пырать.

С. МАКАРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Фронтовиксен çемьисемшĕн тăванла тăрăшăр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 22-мĕшĕ. Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонда тунă çĕре районри ĕççыннисем активлăн хутшăнаççĕ. Паянхи кун тĕлне фонд тумашкăн пурĕ 6 тонна çăнăх, 5 тонна çĕрулми, 8 центнер кĕрпе, 55 килограмм сухан, 44 килограмм çу, 33 килограмм пыл пухнă.

— Фронтовиксен çемьисемшĕн тăванла тăрăшасси — пирĕн тивĕçлĕх, — теççĕ колхозниксем. Çавăн пекех вĕсем фронтовиксен çемьисем валли 1460 кубометр вутă турттарса пачĕç.

Фонд валли

КӲКЕÇ, ноябрĕн 22-мĕшĕ. Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд валли паянхи кун тĕлне пурĕ 3,5 тонна çăнăх, 3 тонна çĕрулми, 2 центнер сухан, 2 центнер купăста, 60 килограмм çу, 24 килограмм пыл пухнă.

Вунă кун хушшинче

СĔНТĔРВĂРРИ, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри ĕççыннисем фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тăвас тĕлĕшпе иртекен çирĕмкунлăха активлăн хутшăнчĕç. Ку ĕç уйрăмăнах Магач тата Умачка ялсоветĕсенчи колхозсенче ăнăçлăн пырать.

Çак вунă кун хушшинче хулара 95 çемьене тивĕçлĕ пулăшу панă. Вăл шутран: 200 мăшăр алсапа носки, 45 кĕпе, 30 килограмм тырă, 60 килограмм çăнăх панă. Сошнинăн виçĕ тăлăх ачине 24 килограмм тырă, пĕрер мăшăр алсапа чăлха панă, фронтовик арăмне Анна Сорокинăна 26 килограмм тырă, пĕр мăшăр носки тата кĕпе панă, пĕр тăлăх ачана пăхса ӳстерекен Хлебникова колхозницăна 16 килограмм тырă тата кĕпе парса пулăшнă.

Ф. ИЛЬИН.

Фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшмаççĕ

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхозра (председателĕ М. Игнатьев) фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçе хакламаççĕ. О. Белова колхозницăн виçĕ пĕчĕк ача. Упăшки фронтра. Паллах, вăл вĕсене пĕччен ĕçлесе тăрантаймасть. Унăн ачисем начар условире пурăнса, çĕтĕк тумтирсемпе шкула çӳреççĕ. Белова колхозница колхоз правленинчен темиçе хутчен те пулăшу ыйтнă, анчах ăна нимĕнле пулăшу та памаççĕ. Çавăн пекех К. Иванова колхозницăн виçĕ ачине нимĕнле пулăшу та паман. Кун пек тĕслĕхсем татах та пур.

Фронтовиксен çемьисене тивĕçлипе пулăшас вырăнне вĕсене хĕсĕрленисем те пулкалаççĕ. Фронтовик арăмĕ В. Николаева пĕррехинче çур кун авăн çапма тухайман пулнă. Ăна вара колхоз правлени виçĕ уйăх хушши колхоза ĕçлеме тухмалла мар тата виçĕ уйăх хушши лаша памалла мар тунă. Çакă вăл пачах та тĕрĕс мар. Кун çинчен районри гособеспечени отделне те пĕлтернĕ. В. Николаева унтан та тивĕçлĕ ответ илеймен.

Фронтовиксен çемьисем çине çакăн пек чунсăрла пăхассине халех пĕтермелле.

Б. ШОРНИКОВ.

Çулталăкри плана тултарнă

КАЛИНИНО. (**Хамăр корр.**). Райпромкомбинат коллективĕ çулталăкри производство планне 10 уйăх хушшинче 102,2 процент тултарчĕ. Социализмлă ăмăртура çĕвĕ çĕлекен, çуна-урапа тăвакан цехсем малта пыраççĕ.

Выигрышсен икĕ выляvĕ

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче Мускавра выигрышсен икĕ выляvĕ пулса иртнĕ: Виççĕмĕш пятилетка заемĕн (пĕрремĕш çулхи кăларăмĕн) 20-мĕш выляvĕ тата Виççĕмĕш пятилетка заемĕн (иккĕмĕш çулхи кăларăмĕн) 16-мĕш выляvĕ.

Виççĕмĕш пятилетка заемĕн (пĕрремĕш çулхи кăларăмĕн) выляvĕнче 518.500 выигрыш выляннă, вĕсем 83.240.600 тенкĕлĕх пулнă.

Виççĕмĕш пятилетка заемĕн (иккĕмĕш çулхи кăларăмĕн) выляvĕнче 680.800 выигрыш выляннă, вĕсем 108.380.400 тенкĕлĕх пулнă. (ТАСС).

Пирĕн земляксем

Мухтавлă воин

Тит Александрович Антонов—чăваш. Вăл Чкаловски районри Татмăш ялĕнче, 1917 çулта çуралнă, мĕн пĕчĕкренех хăюллă пулса ӳснĕ. Хăйĕн паттăр пичĕшĕсене юратнă вăл, вĕсен пултарулăхĕ Тита тĕлĕнтернĕ. Вăл вĕсем пекех пулма тăрăшнă. Ашшĕ—Александр Антонович—служащи, 1919-мĕш çултанпа коммунистла парти членĕ. Пичĕшĕсем—пурте коммунистсем.

Аслă пиччĕшĕ Павел—учительре ĕçлетчĕ,—отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа фронтра çапăçать, сержант. Тепри, Иван, Хĕрлĕ Çар командирĕ, капитан. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ илнĕ. Виççĕмĕш пиччĕшĕ—Василий—танковăй войскăсен командирĕ, мĕн вăрçă пуçланнăранпах нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрет. Шăллĕ те —Марат—Хĕрлĕ Çар командирĕ, лейтенант.

Тит Александрович 1937-мĕш çулта Л. хулинчи Хĕрлĕ ялавлă çар училищине вĕренме кĕрет. Пултаруллă вĕренние кура ăна отделени командирĕ тăваççĕ. Училищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн отечественнăй аслă вăрçă пуçланиччен Инçет Хĕвелтухăçĕнче полк инженерĕ пулса ĕçленĕ.

I

...1941-мĕш çул. Вăрçă пуçламăшĕ. Германи фашисчĕсем тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнни çинчен илтсенех Антоновăн чĕрине хаярлăх тулнă. Юлташсем умĕнче вăл тăшмана хирĕç юлашки юн тумламĕ юличчен çапăçма тупа тунă.

Тепĕр куннех Тит Александров юлташ Хĕвеланăç фронтне тухса кайнă. Çапăçусенче хĕрсе çирĕпленнĕ. Вăл со-

ветăн хăватлă танкĕсене хаяр çапăçăва хăюллăн ерте-ерте кĕнĕ.

... Икĕ талăк хушши хаяр çапăçу пынă. Вăйлăн çирĕплентерсе ларнă нимĕçсем калама çук хытăн хирĕç тăнă. Пирĕн земляк ертсе пыракан танксен экипажĕ часчасах разведкăна кайма приказ илет. Тăватă танк тăшман позицийĕсем еннелле çул тытнă. Тăшман оборони патне çывхарасба нимĕçсем совет машинисем вăртăн куçса пынине асăрхаса илнĕ те тапти-сыпписĕр вут-хĕм тăкма пуçланă. Çав вăхăтра пирĕн малти танк нимĕç снарячĕ тӳрремĕн пырса лекнипе çĕмĕрĕлнĕ.

Совет танкисчĕсем çухалса кайман. Тăшман çине умлăн-хыçлăн вилĕм куçне тăкнă. Хаяр та юнлă çапăçу пуçланса кайнă. Нимĕçсем советăн 4 танкне хирĕç пĕр батальона яхăн пехота тата танксем чылай кĕртсе янă та пысăк çухатусем тӳссех малалла куçма тапаçланнă.

Титăн хăшпĕр юлташĕсем герой вилĕмĕпе вилнĕ. Анчах совет танкисчĕсен çирĕплĕхĕпе паттăрлăхне тăшман нимĕнпе те тытса чарайман. Нимĕçсем, 100-шер виле пăрахса хăварса, оборонăна куçнă. Пилĕк сехет хушши çапăçнă. Пирĕн танксем çине нимĕç самолечĕсем вĕçе-вĕçе килнĕ. Вĕсем танксем çине умлăн-хыçлăн бомба тăкнă. Тит Антоновăн танкĕ ĕçлеме чарăннă. Вăл вилĕм çывхарса килнине туйса илнĕ, вут-çулăм хыпса илнĕ танк ăшĕнчен тухнă та çакăн пек команда панă:

— Пĕрремĕш батальон сылтăмран, иккĕмĕш батальон сулахайран—атакăна! Ура! Тăван çĕршывшăн! Сталиншăн—малалла! — тесе кăшкăрса янă. Нимĕçсем хăраса ӳкнĕ. Вырăссем çавăрса илчĕç тесе, каялла тарма тытăннă. Антонов нимĕçсем çине граната хыççăн граната ыткăнтарнă. Çак питех те хăрушлă вăхăтра уçă курса, Антонов хăйĕн сывă юлнă юлташĕсене пухнă та хамăр чăссем еннелле шуса пуçланă. Анчах ĕç ăнăçман: умра та, хыçра та—нимĕçсем. Мĕнпур çăлăнăç та—инçех те мар сип-симĕс курăнса ларакан хыр вăрманĕнче. Халран кайнă танкистсем çĕр çумĕпе курăнмасăр шуса пынине нимĕçсем калллех асăрханă. Антоновăн икĕ юлташĕ вилмеллех аманнă.

II

Вăл хăйĕн Ваня ятлă юлташĕпе шавласа ларакан вăрмана çитсе выртнă. Мĕнле те пулсан май тупса хамăр чăссем патнелле тухма пулмĕ-ши? Вăрман тăрăх пăшал, тупă сассисем кассăн-кассăн янраса кайнă. Нимĕçсем пирĕн чăссене хĕссе пынă. Халĕ ĕнтĕ хамăр чăссем патне каçма май çукране —тăшман тылне юлнине Титсем тавçăрса илнĕ.

— Çук, тăшмана чĕррĕн парăнмастпăр. Хамăр пиччĕчен темиçе нимĕç салтакне пур-пĕрех «леш тĕнчене» ăсатапăр,—калаçса илнĕ те пĕр пысăк хыр çумне канма ларнă.

«Партизансен отрядне организацилесен, тăшмана эпир фронтри воинсемпе танах сĕнен кӳме пултаратпăр»,—тесе каласа панă вăл юлташне хăйĕн шухăшне.

Каçхине С. ялне апат-çимĕç шырама кайнă. Ялта нимĕçсем пулман, ырсĕр çăхансем суйласа лартнă староста пуç пулса пурăннă. Пирĕн боецсем ял хĕрринчи пĕр киле кĕнĕ. Унта Елена Федоровна тăватă ачипе пурăннă. Елена Федоровна пирĕн воинсене апатлантарнă, ялта нимĕçсем мĕнле хуçаланни çинчен, колхозниксене нумайĕшне тискеррĕн асаплантарса вĕлерни çинчен каласа панă. Вăлах ялта пĕччен красноармеецсем тăшманран пытанса пурăнни çинчен пĕлтернĕ. Красноармеецсем нимĕç тыткăнĕнчен тарнăскерсем пулнă. Вĕсем хăюллăнах партизансен отрядне хутшăнма кăмăл тунă. Çапла пуçланса кайнă пĕр отрядăн ĕçĕсем.

III

Вунă уйăх хушши кĕрешнĕ Антонов юлташ тăшман тылĕнче. Тăшмана пĕтерес ĕçре хăюлăхпа пултарулăх кăтартнăшăн Совет правительстви Антонова Хĕрлĕ Ялав тата Ленин орденĕсем парса наградăланă.

Пирĕн мухтавлă земляк халĕ те отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçать.

Василий ВЕСЕЛОВ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăваш АССР-ĕнчи предприятисен тата учрежденисемпе организацисен руководителĕсене пĕлсе тăма

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автотранспорт Управленийĕ автотранспорт кирлĕ пулакан предприятисен тата учрежденисемпе организацисен руководителĕсене çакна пĕлтерет: ялаласем турттарма автотранспорт кирлĕ пулсан, малашне тӳрех Автоуправленин Коммерчески эксплоатаци отделĕнчен ыйтмалла (Шупашкар хули, Союзнăй ур. 4).

Япаласем турттарма автотранспорт кирлĕ пулсан, заявкисене малтанах парса хумалла, турттарас кун çитиччен сахалтан та 5 талăк малтантарах парса хумалла.

ЧĂВАШ АССР СОВНАРКОМĔ ÇУМĔНЧИ АВТОТРАНСПОРТ УПРАВЛЕНИЙĔ. 3—1.

Пур колхозсене те тата выльăх-чĕрлĕх усракансене пурне те çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: Чăваш АССР Совнаркомĕ 1943-мĕш çулхи августăн 20-мĕшĕнче йышăннă 1087-мĕш №-лĕ постановлени тăрăх, аш-какай мĕнлине тĕрĕслесе тăракан пунктсене пуснă выльăх-чĕрлĕх какайне илеме çаптарма илсе пынă чухне пуснă выльăхăн тирне те илсе пымалла е çав выльăх тирне „Заготживсырье" пунктне кайса пани çинчен пĕлтерекен квитанцие илсе пымалла.

Çав квитанцие е выльăх тирне илсе пымасан, какай çине клеме çапса памаççĕ.

ВЕТУПРАВЛЕНИ.
ЗАГОТЖИВСЫРЬЕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1880 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6 53 84 п. л. Тираж 14.400 экз.